Вĕрентÿ

# Пĕр-пĕринпе çыхăну тытса ĕçлемелле

(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).

Шкулсенче те çак ыйту малтах. Çавăнпа та районти пур вĕрентÿ учрежденийĕсенче те юсав ĕçĕсене вăхăтра тăвассипе тимлетпĕр. Пĕлтĕрхи çул акă 1709,1 тенкĕлĕх туса ирттернĕ çак ĕçсене. Анчах та юсаса çĕнетмелли пирĕн шкулсенче пайтах-ха. «Вĕрентÿ» нацпроекта Чуманкассинчи, Москакассинчи, Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри вăтам шкулсенчи хăш-пĕр кабинетсене пурлăх енчен пуянлатма май килчĕ. Пĕрремĕш класра вĕренекенсем валли те ятарлă çĕнĕ сĕтел-пуканпа доскасем вырнаçтарнă.

Ачасене база шкулĕсене пурĕ 75 ялтан турттарассине йĕркене кĕртнĕ ĕнтĕ. Ку – база шкулĕсенче вĕрентÿ шайĕ çÿллĕрех пулнине шута хурса тунă утăмсенчен пĕри. Шкул библиотекисем тăтăшах çĕнĕ литературăпа, аудио-, видеоаппаратурăпа тата электронлă учебниксемпе пуянланма тытăнчĕç. Çакă пĕтĕмпех ачасен пĕлĕвне анлăлатма пулăшать. Унпа пĕрлех шкулсенче информацие коммуникаци технологийĕсемпе хальлĕхе туллин усă курманни сисĕнет. Ку ыйту çине паян тимлĕрех пăхмалла. Инновациллĕ формăсемпе ĕçлемелле.

Ачасене апатлантарассинче те проблемăсем пур. Апатлану мĕнле пулса пынине тишкернĕ хыççăн рационта ашкакайпа унран хатĕрленĕ çимĕçсем, пулă, çăмарта тата йÿçĕтнĕ сĕтрен хатĕрленĕ çимĕçсем чакни палăрать. Çав хушăрах çĕр улми, кĕрпесем тата çăкăр столовăйсенче ытлашшипех усă курăççĕ. Ку, ачасем ахаль те нумай чирлине шута илсен, ырламалли пулăм мар. Çакă ачасен вĕрентÿ шайĕ çине те витĕм кÿрет.

Вĕрентÿ процесĕ ачасемшĕн интереслĕ пултăр тесе учительсем сахал мар тăрăшаççĕ. Хăйсен пĕлĕвне ÿстернипе пĕрлех пĕр-пĕрин опычĕпе те паллашаççĕ. Çапах та кадрсем енĕпе илес пулсан, çамрăк специалистсем вĕрентÿ сферине сахал килни, унпа пĕрлех хăш-пĕр шкулсенче специалистсем çитменни пăшăрхантарать.

Вĕрентĕвĕн тĕп кăтартăвĕ, паллах, шкул ачи мĕнле ĕлкĕрсе пыни. Выпускниксем вара, шел пулин те, пĕрлехи патшалăх аттестацийĕнче пит хĕретмелли баллсем пухаççĕ. Чăваш Республикинче 26 районпа хуласем хушшинче пирĕн район 18-мĕш вырăнта çеç! Ĕçлемелле те ĕçлемелле-ха малалла. Учительсен харпăр хăйĕн планĕсемпе ĕçлемелле, ачасен вара малалла пурнăçра вĕренмесĕр май çуккине ăнланса илмелле. Пурин те тăрăшмалла.

Республика шайĕнче иртнĕ олимпиадăсен çĕнтерÿçисен шутĕнче пирĕн шкул ачисем пулни кăмăлла кăшт хапăртать. Кашни çулах тăрăшса вĕренекенсем, пултаруллисем – пурĕ 100 ача районти администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине илсе тăраççĕ. Ку та лайăх стимул.

Çав хушăрах шкул ачисем хушшинче йĕркене пăсакансем те пур. Вĕсемпе уйрăмăн ĕçлессине психологсемпе социаллă педагогсен тĕпрен пăхса тухмалла. Сывă пурнăç йĕркине сарассипе татах тăрăшмалла. Шкулти ĕçпе кану тата сывлăха çирĕплетекен лагерьсен пĕр сменăпа кăна ĕçлемелле мар. Ку ĕç татăксăррăн пулмалла. Ашшĕ-амăшĕсен тата ачасен хăйтытăмлăх органĕсен хушшинче тачă çыхăну пулмалла. Çакă веçех районти вĕрентÿ тата воспитани системине çÿллĕрех шая хăпарма май парĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Официально

**Чувашская Республика Моргаушский район**
**Собрание депутатов**
**Шатьмапосинского сельского поселения**
**Решение**
**10.02.2009г. № С-26/1**
д.Шатьмапоси

**Об официальных источниках опубликования муниципальных правовых актов Шатьмапосинского сельского поселения**

В соответствии со статьей 17 Федерального закона от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», статьей 43 Закона Чувашской Республики от 18.10.2004г. №19 «Об организации местного самоуправления в Чувашской Республике» и в целях опубликования муниципальных правовых актов и иной официальной информации Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района

Собрание депутатов Шатьмапосинского сельского поселения **решило:**

1. Установить, что официальным опубликованием муниципальных правовых актов Шатьмапосинского сельского поселения считается первая публикация их полного текста в «Вестнике Моргаушского района» или районной газете «Çĕнтерÿ ялавĕ».
2. Главному бухгалтеру предусмотреть средства на опубликование муниципальных правовых актов Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.
3. Определить официальным сайтом для размещения муниципальных правовых актов Шатьмапосинского сельского поселения сайт Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.
4. Опубликовать настоящее решение в районной газете «Çĕнтерÿ ялавĕ».
5. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию Собрания депутатов Шатьмапосинского сельского поселения по законности и правопорядку (Н.В.Клементьев).

**Глава Шатьмапосинского сельского поселения**
**Н.П. АЛЕКСАНДРОВ.**

Ятлă çынна ял савать

# 50 çул каялла тупа тунă

Çемье – ăрусене çыхăнтаракан, вĕсене малалла тăсакан. Аттепе анне, асаннепе асатте, мăнукĕсем – çакă пулать те вăл чăн-чăн çемье. Чи паллă та асра юлакан уявсем те çемье уявĕсем. Çакнашкал уявсем ирттерме вара çирĕп те тулли çемье кирлĕ. Çемьере вара пĕр-пĕрне хисеплени, килĕштерни пулмалла.

Çакăн пек çемье пирĕн Тойкилтĕ ялĕнче те пур. Акă ĕнтĕ 50 çул пĕрле шăкăл-шăкăл калаçса, юратса пурăнаççĕ Анна Константиновнăпа Иосиф Харитонович Харитоновсем. Çур ĕмĕр каялла юрлă-тăманлă март уйăхĕнче пĕрлешсе çемье çавăрнă Тойкилтĕ каччипе Анаткасси хĕрĕ. Пĕрле килĕштерсе пурăнма сăмах панă вĕсем ун чух. Çак сăмаха тытнă та.

Етĕрнере тракторист профессине алла илнĕренпех, 1957 çултанпах, Иосиф Харитонович çак ĕçе пăрахман. Çурçĕр Казахстана çĕнĕ çĕрсем уçма та кайнă вăл. Шăпах çавăнтан тăван яла отпуска килсен палланă та кÿршĕ ял хĕрĕпе. Ĕçчен каччăна вара епле савмăн-ха? Анна Константиновна – ĕç ветеранĕ. 4 çултах ашшĕсĕр тăрса юлнăскер, хăй те питĕ ĕçчен ÿснĕ. 15 çулта фермăра ĕçлеме пуçланă. Фермăра ĕçлемен кунсенче уй-хир ĕçĕсенче тăрăшнă, лашапа Етĕрне районĕнчи Сарьял ялне тырă турттарнă. Сахал çĕкленĕ-ши вăл йывăр михĕсем?..

Пилĕк ывăлпа пĕр хĕр çуратса ÿстернĕ çак телейлĕ мăшăр. Пур ачи те вĕренсе алла тĕрлĕ специальность илнĕ ĕнтĕ. Çак пысăк çемьере токарьпе сварщик та, утарçăпа электрик те, милици подполковникĕпе сутуçă та пур. Ачисем пурте маттур: пултаруллă та ĕçчен, çынна пулăшма яланах хатĕр. Ывăлĕсем те пурте çарта пулнă – мухтанмалăх пур ашшĕ-амăшĕн. Амăшĕн çуначĕ айĕнчен Мускав-



Çурçĕр таранах вĕçсе тухса саланнă пулсан та, вĕсем питĕ туслă пурăнаççĕ. Кĕçĕнни, Алина, Отаркка магазинĕнче сутуçă пулса ĕçлет. Çынсемпе яланах вăшават вăл.

Ашшĕпе амăшне пăхнă ĕнтĕ ачисем. Ватă çынсем паян та алă усса лармаççĕ-ха – кил таврашĕнче ĕçлеççĕ, вылăх-чĕрлĕх пăхаççĕ. Кÿршĕсемпе те çав тери килĕштерсе пурăнаççĕ. Пилĕк ывăлĕпе кинĕсем, мăнукĕсем килсех тăраççĕ тăван килне, вĕсене кунта яланах кĕтнине туяççĕ.

Çак кунсенче вĕсен килне çывăх тăванĕсем, кÿршĕ-аршисем те пухăнĕç. Пĕр-пĕрне юратса, килĕштерсе пурăнни 50 çул-çке Харитоновсен. Малашнехи пурнăçра та вĕсен сывлăхĕсем çирĕп пулччăр, телей, вăрăм ĕмĕр вĕсене.

**М. НИКОЛАЕВА, Тойкилтĕ библиотекин ертÿçи.**

Хаçатра çырнă хыççăн

# Чиркĕве пулăшаççĕ

Оринин чиркĕвне юсаса çĕнетесси пирки хаçатра маларах çырнăччĕ. Чиркĕве çĕнĕрен ĕçлеттерсе яма, паллах, питĕ йывăр. Укçа-тенкĕ енчен тăкаксем питĕ нумай.

Çынсем вара çак йывăрлăха ăнланса пулăшу пама пуçларĕç. Счет çине В.Г. Христолюбов (Шупашкар) 10000 тенкĕ, А.Н. Козлов (Шупашкар) – 10000 тенкĕ, Н.П. Пещеряковăпа А.Н. Козлов (Шупашкартан) 1000-шер тенкĕ, К.В. Зайцевпа Г.Е. Корнилов (Шупашкартан) 300-шер тенкĕ куçарнă. 100-шер тенкĕ куçарнисем те сахал мар.

Муркаш район çыннисем те малалла çак йыш ĕçре пулăшу парасса шанас килет. Чиркĕве çĕнĕрен хута яни таврари çыннисемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та чиркÿ çуртне юсаса çĕнетме пулăшас текенсем çак реквизитсемпе укçа куçарса пама пултараççĕ. Укçана илекенĕ: Приход Свято-Троицкой православной церкви с. Оринино Моргаушского района ЧР. Банк реквизичĕсем: р/с 40703810075020050050 в чувашское ОСБ № 8613, г. Чебоксары, к/с 30101810300000000609 БИК 049706609 в ГРКЦ НБ Чув. Респ. Банка России. Тÿлев: На восстановление церкви.

Оринин чиркĕвĕ республикăри пур райontан та физически тата юридически çынсене представительсем пулса ĕçлеме йыхравлать. Тĕплĕнрех www.blagotvorenie.mylivepage.ru сайт çинче тупма пултаратăр.

**Орининти Çветтуй Троица чиркĕвĕн прихут канашĕ.**

Пулăшу ыйтатпăр

# Ырă кăмăла шанатпăр

Эпир, Тойкилтĕ шкулĕнче вăренекенсем, кунта 6-мĕш класра вĕренекен Алеша Ораина пулăшма ыйтатпăр. Вăл иртнĕ кĕркунне йывăр чирлесе ÿкрĕ. Ăна Мускаври икĕ операци турĕç ĕнтĕ. Паллах, тÿлевлĕ. Çак уйăхсенче те Алешăна пулăшу кирлĕ. 10-мĕшсем хăйсен ирĕкĕпе ялти çынсенчен укçа пуçтарчĕç. Тавах ырă çынсене.

Эпир вара районти пур шкул ачине те, учительсене те Алешăна çак йывăр самантра пулăшма ыйтатпăр. Алешăна малалла сиплеме укçа-тенкĕпе пулăшсан, тем пек лайăх пулĕччĕ. Ыйтусем пулсан Тойкилтĕ шкулне шăнкăравлăр. Тел.: 64-5-41.

Укçана çак счет çине куçармалла:

Акционерный коммерческий сберегательный Банк РФ, Моргаушское отделение № 7034 Волго-Вятского банка СБ РФ

**ИНН** 770783893 **КПП** 211202001
**Код** налогового органа 2112
Организационно-правовая форма **ОАО**
Форма собственности **смешанная**
Код ОКОНХ 96130
Код ОКПО 09286400
Код КФС 41
Код СОАТО 1197440137
Код КОПФ 47
Код СООГУ 05124
Код ОГРН 1027700132195
**Р/с А** 30302810175000607514
**П** 30301810875000607514
Банк получ.: Чувашское отделение №8613 г. Чебоксары
**БИК** 049706609
**К/с** 30101810300000000609
**Для зачисления во вклады: Р/счет** 42307810575140004563/48
Получатель: Депозиты физических лиц.

Спорт

# Арçынсем волейболла вылĕç

Мартăн 28-мĕшĕнче ĕç коллективĕсен спартакиадипе палăртнă черетлĕ ăмăрту иртет. Муркашри Спорт çуртĕнче арçынсен командисем волейболла выляççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать. Çĕнтерÿçĕсене, вăйăра палăрнă выляканcене дипломсемпе тата парнесемпе чысласçĕ.

**Хамăр инф.**


Пĕлтерÿсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1060, местоположение: участок находится примерно 1712 м по направлению на север от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Карамалькасы, ул. Солнечная, д. 30, для сельскохозяйственного производства, площадью 196307 кв. м.**

**Заявки принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-6.**

**Виççĕ пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 68-4-14. Кашмаш ялĕ.**

**Требуется менеджер по продаже стройматериалов: профлист, металлочерепица, крепежные материалы, буры, электроинструменты. Оплата после собеседования. Тел.: 48-19-98, 8-96-03-04-09-02.**

**Утă сутатпăр. Тел.: 8-909-304-08-81, 8-909-304-02-71, 68-5-89.**

**Срочно продаю трактор МТЗ-50 в хорошем состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-927-99-22-728.**

**Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границ земельных участков, расположенных по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с/т «Березка», участки № 226, 227.**

**Заказчиками кадастровых работ являются Захаров Владимир Григорьевич, адрес: г. Чебоксары, ул. Университетская, д. 31, кв. 164 и Токарева Валентина Александровна, адрес: г. Чебоксары, пр. М. Горького, д. 38/2, кв. 9.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, правление с/т «Березка» 27 апреля 2009 г. в 11 часов.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются 09 апреля 2009 г. по 17 апреля 2009 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границ: участки № 224, 225, 230 в с/т «Березка», земли с/т «Березка».**

**При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**

**Требуется повар. Зарплата достойная. Тел.: 8-917-674-68-16.**

**Куплю картофель. Продаю ячмень, овес (семенной). Тел.: 8-905-342-87-44.**

**ООО «Заря» требуется бухгалтер. Тел.: 8-903-066-20-73.**

**Утă сутатăп. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх. Адресĕ: Мăн Сĕнтĕр ялĕ. Тел.: 8-960-310-70-37.**

**Вăкăрсем, тынасем, сурăх-такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.**

**Ноябрь уйăхĕнче пăруламалли хура тĕслĕ тына пăру сутатпăр. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх. Ыйтса пĕлмелли телефон: 8-927-990-65-78.**


Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши пуçламăш классене вĕрентнĕ

**Таисия Корниловна**
**АЛЕКСЕЕВА**

пенсионерка вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Шапошников В.Л.**
**Номер подписан 24.03.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3860.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.